ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ÇУТ ÇАНТАЛĂКĂН СИПЛӖХЛӖ ПУЯНЛĂХӖСЕМ, СИПЛЕВПЕ СЫВЛĂХА ÇИРӖПЛЕТМЕЛЛИ ВЫРĂНӖСЕМ ТАТА КУРОРЧӖСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КӖРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнĕсем тата курорчĕсем çинчен" 2003 çулхи авăн уйăхĕн 26-мĕшĕнчи 24 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 56 №; 2005, 62 №; 2006, 71 №; 2007, 73 №; 2012, 94 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5 №; "Республика" хаçат, 2014, юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ; 2022, чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) кӳртĕме çакăн пек çырса хурас:

"Çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсемпе, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсемпе тата курортсемпе санаторипе курорт сиплевне тата медицина реабилитацине йĕркелеме усă кураççĕ тата вĕсем уйрăмах сыхламалли территорисем тата усă курнă тата сыхланă чухнехи хăйне евĕр уйрăмлăхсемлĕ объектсем шутланаççĕ.

Çак Саккун Чăваш Республикин территорийĕнчи çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсене, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсене тата регион пĕлтерĕшлĕ курортсене тĕпчесе пĕлес, вĕсемпе усă курас, аталантарас тата сыхлас тĕлĕшпе Чăваш Республикин патшалăх политикин никĕсĕсене палăртать.";

2) 1–3 статьясене çакăн пек çырса хурас:

"1 статья. Тĕп ăнлавсем

Çак Саккунра Федерацин "Çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем тата курортсем çинчен" 1995 çулхи нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 26-ФЗ №-лĕ саккунĕпе (малалла – Федерацин "Çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем тата курортсем çинчен" саккунĕ) палăртнă тĕп ăнлавсемпе усă кураççĕ.

2 статья. Чăваш Республикин çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем тата курортсем çинчен калакан саккунĕсем

Чăваш Республикин çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем тата курортсем çинчен калакан саккунĕсем Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн, Федерацин "Çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем тата курортсем çинчен" саккунĕн, федерацин ытти саккунĕсен, вĕсемпе килĕшӳллĕн йышăнакан Раççей Федерацийĕн ытти нормативлă право акчĕсен положенийĕсем çинче никĕсленеççĕ тата Чăваш Республикин Конституцийĕнчен, çак Саккунран тата Чăваш Республикин ытти нормативлă право акчĕсенчен тăраççĕ.

3 статья. Территорие регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăн е регион пĕлтерĕшлĕ курорт тесе йышăнасси, чикĕсене палăртасси, улăштарасси тата регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăна, регион пĕлтерĕшлĕ курорта пĕтерсе хурасси

1. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн территорие регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăн е регион пĕлтерĕшлĕ курорт тесе йышăннине ятарласа туса ирттернĕ курортологи, гидрогеологи

тата ытти тĕпчевсене тĕпе хурса Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртнă çавнашкал тĕпчевсен переченĕпе тата вĕсене туса ирттермелли йĕркепе килĕшӳллĕн тăваççĕ.

2. Территорие çав территори чиккисенче çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем вырнаçнă, ун çинчен пĕлтерекен сведенисене Раççей Федерацийĕн курорт фончĕн патшалăх реестрне кĕртнĕ пулсан кăна регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăн е регион пĕлтерĕшлĕ курорт тесе йышăнма пултараççĕ.

3. Территорие регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăн е регион пĕлтерĕшлĕ курорт тесе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ федерацин курорт ĕçĕ енĕпе патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăçлас тата нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕçлекен ĕç тăвакан власть органĕпе килĕшсе татăлнă тăрăх йышăнать.

4. Территорие регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăн е регион пĕлтерĕшлĕ курорт тесе йышăнсси çинчен калакан йышăну çумне çавнашкал территорин чиккисем çинчен калакан сведенисене çирĕплетнĕ йĕркепе хушса хумалла.

5. Регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнăн е регион пĕлтерĕшлĕ курортăн чиккисене улăштарасси çинчен е тата регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăна е регион пĕлтерĕшлĕ курорта пĕтерсе хурасси çинчен калакан йышăнăва Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çак статьян 3-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă йĕркепе тăвать.

6. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн территорие регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăн е регион пĕлтерĕшлĕ курорт тесе йышăнассине, чикĕсене палăртассине, улăштарассине тата регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăна е регион пĕлтерĕшлĕ курорта пĕтерсе хурассине Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртнă йĕркепе пурнăçлаççĕ.";

3) 4 статьяра:

а) пĕрремĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсемпе, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсемпе тата курортсемпе усă курас тата вĕсене сыхлас тĕлĕшпе пурнăçлакан полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:";

ă) иккĕмĕш тата пиллĕкмĕш абзацсенче ", аталантарасси" сăмаха кăларса пăрахас;

4) 5 статьяра:

а) пĕрремĕш–виççĕмĕш абзацсене çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсемпе, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсемпе тата курортсемпе усă курас тата вĕсене сыхлас тĕлĕшпе пурнăçлакан полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

территорие регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăн е регион пĕлтерĕшлĕ курорт тесе йышăнасси, вĕсен чиккисене улăштарасси е вĕсене пĕтерсе хурасси çинчен йышăнусем тăвасси;

çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсен санитари (сăрт-ту санитарийĕн) сыхлавĕн округĕсене палăртасси, улăштарасси е пĕтерсе хурасси çинчен калакан йышăнусене тăвасси, федераци пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсен чиккисенче вырнаçнă çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсемсĕр, федераци пĕлтерĕшлĕ курортсемсĕр е курортлă регионсемсĕр пуçне;";

ă) тăваттăмĕш, улттăмĕш тата çиччĕмĕш абзацсем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

б) çакăн пек çырса абзацсем хушса хурас:

"Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн федерацин курорт ĕçĕ енĕпе патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăçлас тата нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕçлекен ĕç тăвакан власть органĕпе пĕрле тивĕçлĕ территорисене федераци пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем, федераци пĕлтерĕшлĕ курортсем е курортлă регион тесе йышăнасси çинчен, вĕсен чиккисене улăштарасси е вĕсене пĕтерсе хурасси çинчен калакан йышăнăва тăвас тĕллевпе территорисене сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем, курортсем е курортлă регион тесе йышăнасси çинчен калакан представленисене Раççей Федерацийĕн Правительствине ярса парасси;

регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсен территорийĕсене тата регион пĕлтерĕшлĕ курортсене аталантарассине, вĕсене сыхлассине тата вĕсен чиккисенче вырнаçнă çут çанталăкăн сиплев ресурсĕсене сыхлассине Федерацин "Çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем тата курортсем çинчен" саккунĕпе килĕшӳллĕн тивĕçтересси;

Федерацин "Çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем тата курортсем çинчен" саккунĕпе пăхса хăварнă ытти полномочисене пурнăçласси.";

5) 6 статья хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

6) 7 статьяра:

а) ятне çакăн пек çырса хурас:

"**7 статья. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсемпе, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсемпе тата курортсемпе усă курас тата вĕсене сыхлас тĕлĕшпе полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн полномочийĕсем**";

ă) пĕрремĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсемпе, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсемпе тата курортсемпе усă курас тата вĕсене сыхлас тĕлĕшпе полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ çак ĕçсене пурнăçлать:";

б) виççĕмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

в) тăваттăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсемпе тата регион пĕлтерĕшлĕ курортсемпе усă курас тата вĕсене сыхлас енĕпе пулакан хутшăнусене йĕркелесе тăрасси;";

г) пиллĕкмĕш абзацра "(Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене)" сăмахсене кăларса пăрахас;

д) улттăмĕш тата çиччĕмĕш абзацсене çакăн пек çырса хурас:

"территорие регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăн е регион пĕлтерĕшлĕ курорт тесе йышăнасси çинчен калакан сĕнӳсене пĕтĕмлетесси тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне тăратасси;

çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсен санитари (сăрт-ту санитарийĕн) сыхлавĕн округĕсене, федераци пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсен федераци пĕлтерĕшлĕ курортсен, курортлă регионсен чиккисенче вырнаçнă çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсемсĕр, палăртасси, улăштарасси е пĕтерсе хурасси çинчен калакан сĕнӳсене пĕтĕмлетесси тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне тăратасси;";

е) саккăрмĕш абзацра "тата вырăнти" сăмахсене кăларса пăрахас;

ё) вуннăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Раççей Федерацийĕн курорт фончĕн патшалăх реестрне регион пĕлтерĕшлĕ сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем, регион пĕлтерĕшлĕ курортсем тата çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем çинчен калакан сведенисене тăратасси тата унта тивĕçлĕ документсене вырнаçтарасси;";

ж) çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Федерацин "Çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнсем тата курортсем çинчен" саккунĕпе пăхса хăварнă ытти полномочисене пурнăçласси.";

7) 9 статьяра:

а) пĕрремĕш тата иккĕмĕш абзацсем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă) виççĕмĕш абзацра "çăл куçсенчен укçа-тенкĕ уйăрса" сăмахсене "Раççей Федерацийĕн бюджет тытăмĕнчи бюджетсен укçи-тенки шучĕпе укçа-тенкĕ уйăрса тата" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун 2024 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕ
43 №